***Ядрицова Алёна Андреевна***
учитель
МБОУ «Ибресинская СОШ №2»
пгт Ибреси, Чувашская Республика
***Ядранская Инесса Владимировна***
директор центра регионального развития
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»
Минобразования Чувашии
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ИЗУЧЕНИЕ СОВРЕМЕННОЙ ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЫ НА НЕСТАНДАРТНЫХ УРОКАХ

***Аннотация**: в статье задаётся вопрос: как добиться наибольшей эффективности урока родной литературы сегодня? Погружение в мир знаний должно происходить при активном участии ребёнка. Он должен искать, пробовать и ошибаться. Нетрадиционные формы работы позволяют разнообразить учебную деятельность, они способствуют повышению интеллектуальной активности учащихся, а, следовательно, и эффективности урока. В статье рассматриваются творческие принципы методики нестандартных уроков, выделяются характерные группы нестандартных уроков. Статья содержит сценарий игры для проведения нестандартного урока.*

***Ключевые слова**: повышение интереса школьников, изучение литературы, новые формы обучения, творческие принципы методики нестандартных уроков, совместное творчество учителя и ученика, уроки с игровой технологией.*

***Аннотаци**: статьяра «литература урокĕ пысăк тухăçлă irттĕр тесен пирĕн мĕн тумалла-ши?» текен ыйтăва хускатнă. Литература тĕнчине путма ачан урокра активлă ĕçлемелле: шырамалла, тишкермелле, пĕтĕмлетмелле. Йăлана кĕмен уроксем ĕçе тĕрлĕ майлă йĕркелеме, ачасен ăс-хакăлне ÿстерме, çавăнпа та урока тухăçлă irттерме те пулăшаççĕ. Статьяра йăлана кĕмен*


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*уроксен методика уйрăмлăхĕсем çинчен асăннă, çак уроксен тĕсĕсемпе паллаштарнă, йăлана кĕмен пĕр урокăн сценарине çырса кăтартнă.*

***Тĕп сăмахсем**: тăван чăваш литературине вĕрентнĕ чухне ачасене кăсăклантармалли çĕнĕ çул-йĕрсем, йăлана кĕмен уроксен çĕнĕ формисем, методикăри пултарулăх принципĕсем, вĕренекенпе вĕрентекен пĕрле ĕçлени, вăйă технологийĕпе йĕркеленĕ уроксем.*

Вырăс шкулĕсенче тăван чăваш литературине вĕрентес ыйту Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсемпе çыхăннă [4]. Вырăс шкулĕсенче тăван чăваш литературине вĕрентессин хăйне евĕрлĕхĕ пур – шкул курсĕнчи пур предмета та, тăван чĕлхепе литературисĕр пуçне, вырăсла вĕрентеççĕ. Çавăнпа та, çакăн йышши шкулсенче тăван чăваш литературине вĕрентессин чи паллă аспекчĕсенчен пĕри – вĕренекенсем тăван чĕлхепе вуланă илемлĕ текста тĕрĕс ăнланма пултарни.

Вĕрентекенсен шкул ачи çут çанталăк никĕсленĕ пуянлăха, халăхăн хăйне евĕр вăй-хăват парса тăракан мулне мĕнле те пулин упраса хăвартăр тесе, ăна малалла аталантартăр тесе тăрăшмалла. Çавăнпа та вĕрентекенсен шкул ачисене тăван чĕлхепе литературине вĕрентме çĕнĕ çул-йĕрсем, меслетсемпе майсем шырамалла. Ача тăван чĕлхепе тата литературипе кăсăклансан çеç чăваш чĕлхи унăн халăхĕн, унăн ашшĕпе амăшĕн чĕлхийĕ пулнине, чăваш литературийĕ тăван халăхăн мулĕпе шухăшлавĕ пулнине ăнланса илет.

Шкул ачине предметпа интереслентермелли мелсем чылай: спектакль-уроксем, литература каçĕсем, ку е вăл çыравçăн пултарулăхĕпе çыхăннă экскурси уроксем… Çапах та литература урокĕсенче чи кирли, пирĕн шутпа, ачасем хăйсемшĕн пĕр-пĕр эстетика, философи е ăс-хакăл проблемине «уçса пама» пултарни.

Урок тухăçлă ирттĕр тесен пирĕн мĕн тумалла-ши? Кун йышши ыйтусем эпир хамăр ума час-часах лартатпăр. Тен, çавăнпа та пулĕ юлашки вăхăтра «йăлана кĕмен уроксем» (нетрадиционные формы обучения) текен ăнлав çуралчĕ. Тĕслĕхрен, И.П. Подласный «Педагогика» кĕнекинче йăлана кĕмен уроксен 36 тĕсне палăртать [3].


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Пӗлӳ тӗнчине путни ача урокра активлӑ ӗҫленинчен килет. Ачан урокра шырамалла, ӗҫлемелле, йӑнӑшмалла. Йӑлана кӗмен уроксем ӗҫе тӗрлӗ майлӑ йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ, ачасен ӑс-хакӑлне ӳстерме пулӑшаҫҫӗ, ҫавӑнпа та урока тухӑҫлӑ ирттерме те пулӑшаҫҫӗ.

Т.Я. Ерӗмина «Педагогические мастерские: инновационные технологии на уроках литературы» [2] кӗнекинче йӑлана кӗмен уроксен методикӑри пултарулӑх принципӗсем ҫинчен тӗплӗн ҫырса кӑтартать. Вӑл ҫакӑн пек принципсене палӑртать:

1. Уроксене традицине кӗнӗ шаблонсемпе йӗркелеменни.

2. Кашни ачана урокра ӗҫлеттерме, кӑсӑклантарса яма тӑрӑшни.

3. Ачасен кӑмӑл-шухӑшне шута илни.

4. Ачасене пӗр-пӗринпе ку е вӑл ӗҫ ҫинчен канашлама ирӗк пани.

5. Хаклав ӗҫне йӗркелени.

Йӑлана кӗмен уроксен тӗсӗсем чылай. Эпир юлашки вӑхӑтра хамӑр ӗҫре час-часах усӑ куракан йӑлана кӗмен уроксен тӗсӗсем ҫинчен каласа хӑварасшӑн:

1. Вӑйӑ е ӑмӑрту мелӗпе йӗркеленӗ уроксем (викторина урок, кроссворд урок, конкурс урок, эстафета урок).

2. Йӑлана кӗнӗ уроксене улӑштарса йӗркеленӗ практикум урок, экспресс урок, лекци урок.

3. Кулленхи пурнӑҫран илнӗ формӑсемпе усӑ курнӑ уроксем (тӗпчев урокӗ, интервью урок, ыйту-хурав урокӗ).

4. Пурнӑҫри тӗрлӗ пулӑма аса илтерекен уроксем (выставка урок, пресс-конференци урок).

Тӑван литература урокӗсенче ҫакӑн йышши формӑсемпе усӑ курни ачасен активлӑхне ӳстерме пулӑшать.

Йӑлана кӗмен уроксем ирттернӗ чухне вӗрентекенӗн ку е вӑл класс шайне шута илмелле, мӗншӗн тесен пур класс та йӑлана кӗмен формӑпа ӗҫлеме пултараймасть. Йӑлана кӗмен формӑсемпе ӗҫлеме ачасене пӗчӗккӗн хӑнӑхтарса пымалла.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Юлашки вăхăтра вĕрентекенсем уроксенче час-часах вăйă мелĕпе усă курнине асăнса хăвармалла. Вăйăра ача хăйне ирĕклĕрех тытма пултарать. Çакă вара ăна малалла аталанма пулăшать, чăваш чĕлхипе литературине, культурине малалла тăрăшса вĕренме хистет.

Вулаканăмăра *«Пĕр ыйтăвăн çĕр хуравĕ»* вăйă йĕркипе паллаштарасшăн. «Пĕр ыйтăвăн çĕр хуравĕ» турнир евĕр йĕркеленĕ урока 7-мĕш класра вĕренӳ çулĕ варринче ирттерме юрать. Вăйă 5–7-мĕш классенче чăваш литературине, чăваш чĕлхине, тăван ен культурине вĕреннине шута илнĕ.

Вĕрентекен малтанах ачасене урок тĕллевĕпе тата задачисемпе паллаштарать.

Урок телевидени программипе ирттерекен «100/1» евĕр иртет. Класс икĕ (е виçĕ) ушкăна пайланать. Пурне те пĕлме пулăшакан турнир икĕ (е виçĕ) ушкăнри ачасене урокра ĕçлеме хавхалантарса пырать, пĕр-пĕриншĕн шухăшлама, пăшăрханма вĕрентет.

«Пĕр ыйтăвăн çĕр хуравĕ» вăййăн тĕллевĕ – вĕреннĕ темăсемпе чи анлă сарăлнă ыйтусене хуравласси, пĕр вариантлă хуравпа калама пултарасси. Тĕслĕхрен, «Кам вăл К.В. Иванов?» ыйтăва тĕрлĕрен хуравлама пулать: «сăвăçă», «классик», «Нарспи» поэма авторĕ» [1] тата ытти те.

«Пĕр ыйтăвăн çĕр хуравĕ» – ушкăнпа вылямалли вăйă. Ушкăнри кашни ача хăйĕн хуравĕн версине калать, хăйне валли очко пуçтарать. Кашни ача хăйне валли очко пуçтарать пулсан та, çĕнтерӳçĕ ята е выляса янă ята пĕр ача мар, ушкăн илет.

*Вăйă йĕрки:* икĕ (е виçĕ) ушкăнри ачасем (кашни ушкăнра пилĕк (е ултă ача) мала тухас тĕллевпе тĕрлĕ ыйтăва хуравлаççĕ, хăйсене валли очко пуçтараççĕ. Вăйă пилĕк туртан тăрать: ансат вăйă, иккĕллĕ вăйă, виççĕллĕ вăйă, тепĕр майлă вăйă (е кутăнла) тата пысăк вăйă.

Вăйăра экран çинчи *табло* пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртмалла. Табло çинче ыйтусен анлă сарăлнă ултă хуравĕ (малтанлăха çак хуравсем курăнмаççĕ). Пысăк вăйăри таблора пурĕ пилĕк хурав.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Вăйă пуçламăшěнче ушкăнсенсен ачасем хăйсемпе тата ушкăн ячěсемпе паллаштараççě.

*Ансат вăйă*

Ансат вăйă капитансен «тупăшěнчен» пуçланать. Ятарлă сěтел умне ушкăн капитанěсем тухаççě. Вěсем хире-хирěç тăраççě. Капитансем умěнче – пěчěк шăнкăравсем. Ертӳçě ыйту парать. Ку е вăл капитанăн тепěр ушкăнри капитанран (капитансенчен) маларах шăнкăрава илсе «сигнал» парса ěлкěрмелле. Маларах «сигнал» панă капитан хăйěн хуравне калать. Енчен те хурав таблора пур пулсан тивěçлě йěрке экран çине тухать (йěркери очко «вăйă фондне» куçать). Анлă сарăлнă хурав таблора чи аялти йěркере вырнаçнă, çавăнпа унăн хисепě те пěчěкрех. Малалла хăйěн хуравěпе тепěр ушкăн капитанě паллаштарать. Енчен те унăн хуравě таблора тепěр ушкăн капитанěн хуравěнчен çӳлерехри йěркере пулсан ертӳçě малалла çак ушкăнпа ěçлет, ушкăна хуравлама ирěк парать. Енчен те таблора асăннă хурав пулмасан ертӳçě малтанхи ушкăнпа «выляма пуçлать». Çапла майпа ертӳçě ушкăнри ачасемпе «паллашать».

Ушкăнсене палăртнă хыççăн ертӳçě вăййăн тěп пайне куçать. Ертӳçě кашнинчен черетпе хурав версине ыйтать. Ушкăнри ачасем хурав версисене калаççě. Енчен те хурав таблора пур пулсан, тивěçлě йěрке тата очко экран çине тухать. Енчен те хурав пулмасан тепěр ушкăн хăйěн хуравне калать. Вăйă таблори ултă йěрке те «уçăличчен» е ушкăнсем пěр харăсах пěрин хыççăн тепри виçě хутчен тěрěс мар хурав париччен тăсăлать.

Енчен те ку е вăл ушкăн виçě хутчен тěрěс мар хурав пачě пулсан ертӳçě тепěр ушкăнпа блиц-опрос туса ирттерет. Ертӳçě ушкăнри тăвату ачана тăвату хурав калама хушать. Капитанăн çак хуравсенчен пěрне суйласа илмелле е хăйěн хурав вариантне каламалла. Хурав таблора пур пулсан тивěçлě йěрке экран çине тухать (йěркери очко «вăйă фондне» куçать), енчен те хурав таблора çук пулсан «вăйă фончě» тепěр ушкăна куçать.

Вăйă вěçěнче пěлеймен хуравсем юлсан ертӳçě куракансене хуравлаттарать е таблори йěркесене хăй уçать.

*Иккěллě тата виççěллě вăйă*


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Иккĕллĕ ваййапа виççĕллĕ вайă ахаль вайă пекех иртеççĕ. Ахаль ваййапа танлаштарсан пĕчĕк уйрăмлăх пур: хуравсен йĕркисенче очко шучĕ кăштах пысăкрах. Çавăн пекех выляв пуçламăшĕ капитансем хушшинче мар, ушкăнри иккĕмĕшпе виççĕмĕш ача хушшинче иртет (енчен те иккĕмĕш е виççĕмĕш ача малтанхи вылявра хутшăннă пулсан выляв пуçламăшĕнче вара вĕсемпе çумăн тăракан ача хутшăнать).

*Тепĕр майлă вайă (е кутăнла вайă)*

«Тепĕр майлă вайă» турти вылякансемшĕн таблори пĕрремĕш йĕркери хуравсене пĕлни мар, пиллĕкмĕш е улттăмĕш йĕркесенчен сăмахсене пĕлни лайăхрах, мĕншĕн тесен ку йĕркесенчи очкосен хисепĕ пысăкрах. Ертÿçĕ ыйту панă хыççăн ушкăнсене шухăшлама 30 çеккунт вăхăт парать. Тепĕр 30 çеккунтран ушкăн капитанĕсем хуравсене калаççĕ. Малтан чи сахал очко пухнă ушкăн хуравлать, кайран – ытти ушкăнсем. Хурав хыççăн ушкăнсем хăйсен хурав версине улăштарма пултараймаççĕ.

Енчен те вылякансем хурава пĕлеймерĕç пулсан – вĕсен очко хисепĕ ÿсмест. Енчен те тепĕр ушкăн тĕрĕс хуравларĕ пулсан очко хисепĕ тĕрĕс хурав каланă ушкăна куçать. «Тепĕр майлă вайă» час-часах ваййа тепĕр майлă улăштарса хума пултарать. «Тепĕр майлă вайă» турти ыйтусем «Чи паллă …» сăмахсенчен пуçланаççĕ. Тĕслĕхрен, *«Чи паллă чăваш спортсменĕ»*.

*Пысăк вайă*

Пысăк ваййа чи нумай очко пухнă ушкăнран икĕ ача тухать. Вайă пуçланиччен вĕсем пĕр-пĕрипе ваййа хăшĕ пуçласси пирки калаçса татăлаççĕ (калаçса татăлаймасан ертÿçĕ вĕсемпе «Чул, хут, хачă» ваййа выляттарса илет). Маларах вылякан ача ыйтусене хуравланă чухне тепри коридора тухать. Вылякан ачан 2 минут хушшинче ертÿçĕ панă ыйтусене хуравлама тăрăшмалла. Унтан ачасем вырăнпа улшăнаççĕ. Ертÿçĕ маларах панă ыйтусенех 2-мĕш ачана парать. Вăл та çак ыйтусенех 2 минут хушшинче хуравлать. Анчах та вылякансен хуравĕсем пĕр пек пулмалла мар. Енчен те хуравсем пĕр пек пулчĕç пулсан, ятарлă сигнал янăраса каять. Хуравлакан ача хăварт çеç хăйĕн хуравне тепĕр вариантпа улăштарать.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Вылянă ачасен хуравĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн ушкăнри очкосен шутне палăртаççĕ, ушкăн «фондне» хушаççĕ.

Вăйăра чи нумай очко пуçтарнă ушкăн çĕнтерет.

*1 тур. «Ансат вăйă».*

Ушкăн капитанĕсем тухаççĕ.

*Тĕллев*: тупмалли юмахсем çинчен аса илесси.

*Ыйту*: чăвашсем тупмалли юмахсене ытларах ăçта-ăçта каланă?

| | | |
|---|---|---|
| *1* | *1* | *1* |
| | *2* | |
| | *3* | |
| *X* | *4* | *X* |
| *X* | *5* | *X* |
| *X* | *6* | *X* |

| | | |
|---|---|---|
| *1* | Чăпта çапнă çĕрте 15 | *1* |
| | Выртмара 13 | |
| | Арманта 11 | |
| *X* | Килте (каçсерен) 9 | *X* |
| *X* | Вăйăра (ачасем) 7 | *X* |
| *X* | Улахра 5 | *X* |

*2 тур. «Иккĕллĕ вăйă».*

Кашни ушкăнран иккĕмĕш вылякансем тухаççĕ.

*Тĕллев*: чăваш халăх юмахĕсем çинчен аса илесси.

*Ыйту*: Сашăпа Петя чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем вуласа тухрĕç. Мĕнле чĕр чунсем çинчен вуларĕç-ши вĕсем?

| | | |
|---|---|---|
| *2* | *1* | *2* |
| | *2* | |
| | *3* | |
| *X* | *4* | *X* |
| *X* | *5* | *X* |
| *X* | *6* | *X* |

| | | |
|---|---|---|
| *2* | Така 30 | *2* |
| | Чĕрĕп 25 | |
| | Упа 20 | |



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| | | |
|---|---|---|
| *Х* | Кашкăр 15 | *Х* |
| *Х* | Мулкач 10 | *Х* |
| *Х* | Тилĕ 5 | *Х* |

*3 тур. «Виççĕллĕ вăйă».*

Кашни ушкăнран виççĕмĕш вылякансем тухаççĕ.

*Тĕллев*: К.В. Иванов пултарулăхне аса илесси.

*Ыйту*: К.В. Иванов мĕн-мĕн çинчен çырнă?

| | | |
|---|---|---|
| *3* | *1* | *3* |
| | *2* | |
| | *3* | |
| *Х* | *4* | *Х* |
| *Х* | *5* | *Х* |
| *Х* | *6* | *Х* |

| | | |
|---|---|---|
| *3* | Ĕçченлĕх çинчен 20 | *3* |
| | Илемлĕх çинчен 18 | |
| | Икĕ хĕр çинчен 16 | |
| *Х* | Çуркунне çинчен 14 | *Х* |
| *Х* | Юрату çинчен 10 | *Х* |
| *Х* | Нарспи çинчен 8 | *Х* |

*4 тур «Тепĕр майлă вăйă».*

Кашни ушкăнран тăваттăмĕш вылякансем тухаççĕ.

*Тĕллев*: чăваш çыравçисем çинчен калаçтарасси.

*Ыйту*: чи паллă чăваш çыравçи.

| | | |
|---|---|---|
| ? | *1* | ? |
| | *2* | |
| | *3* | |
| *Х* | *4* | *Х* |
| *Х* | *5* | *Х* |
| *Х* | *6* | *Х* |

| | | |
|---|---|---|
| ? | К.В. Иванов 15 | ? |
| | П.П. Хусанкай 30 | |
| | Г.Н. Волков 45 | |
| *Х* | М.Д. Трубина 60 | *Х* |
| *Х* | М.Н. Юхма 80 | *Х* |
| *Х* | В.Давыдов-Анатри 100 | *Х* |


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

*5 тур «Пысăк вăйă».*

*Тĕллев*: кĕске вăхăт хушшинче 5 ыйтăва хуравламалла.

*Ыйтусем*:

1. П. Хусанкай хăйĕн хайлавĕсенче мĕн-мĕн çинчен çырнă?
2. Петр Кипарисовăн «К.В. Иванов юрă итлет» картининчи улаха килнĕ çынсем мĕн тунине калăр.



Петр Кипарисов. К.В. Иванов юрă итлет

3. К.В. Иванов çырнă «Нарспи» поэмăри Нарспи ирех тăрса мĕн ĕçлет?
4. П. Хусанкай çырнă «Çарăк» юмахри карчăкпа старик мĕн-мĕн тăваççĕ?
5. Литература мĕн тума пулăшать?

| *1 хурав вариантĕ* (*1 вылякан валли*) | *2 хурав вариантĕ* (*2 вылякан валли*) |
|---|---|
| *1* | *1* |
| *2* | *2* |
| *3* | *3* |
| *4* | *4* |
| *5* | *5* |
| *6* | *6* |

| *Ыйту №* | *Хурав варианчĕсем* | *Балсем* |
|---|---|---|
| *1.* | Тăван чĕлхе çинчен | *35* |
| | Аптраман тавраш çинчен | *30* |
| | Туслăх çинчен | *25* |
| | Атăл çинчен | *20* |
| | Çарăк çинчен | *18* |



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

| | | |
|---|---|---|
| *2.* | Юрлаççĕ | *35* |
| | Итлеççĕ | *30* |
| | Лараççĕ | *25* |
| | Ĕçлеççĕ | *20* |
| | Калаççĕ | *18* |
| *3.* | Тумланать | *35* |
| | Тĕрĕ тĕрлет | *30* |
| | Çĕлет | *25* |
| | Пир тĕртет | *20* |
| | Апат хатĕрлет | *18* |
| *4.* | Шухăшлаççĕ | *35* |
| | Акаççĕ | *30* |
| | Пурăнаççĕ | *25* |
| | Хăпараççĕ | *20* |
| | Калаçаççĕ | *18* |
| *5.* | Сочинени çырма | *35* |
| | Ыйтусем çине хуравлама | *30* |
| | Хитре калаçма | *25* |
| | Шухăшлама | *20* |
| | Танлаштарма | *18* |

***Список литературы***

1. Андреев И.А. Чăваш чĕлхи. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2011. – 319 с.

2. Ерёмина Т.Я. Педагогические мастерские: инновационные технологии на уроках литературы / И.А. Андреев. – М.: Просвещение, 2013. – 160 с.

3. Подласный И.П. Педагогика. – М.: Владос, 2007. – 463 с.

4. Федеральный государственный образовательный стандарт начального общего образования (утв. приказом Министерства образования и науки РФ от 6 октября 2009 г. №373), Федеральный государственный образовательный стандарт основного общего образования (утв. приказом Министерства образования и науки РФ от 17 декабря 2010 г. №1897) [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://fgos.ru/


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)